28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945 НОЯБРЬ 11 ВЫРСАРНИКУН 219 (6970) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн, ЧАССР Верховнăй Совечĕн тата Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

ХĔЛЛЕХИ СПОРТ СЕЗОННЕ ТИВĔÇЛИПЕ КĔТСЕ ИЛЕР

Пирĕн Совет çĕршывĕнче физкультурăпа спорт ĕçсыннисем хушшинче ытларах та ытларах саралса пырать. Отечественнăй аслă вăрçă çулĕсенче те физкультура малалла аталанса пычĕ. Çулсеренех пулса иртекен кроссемпе ăмăртусем, эстафетăсемпе спартакиадăсем те çакна лайăх кăтартса параççĕ.

Вăрçă—çынăн сывлăхĕпе шухăш-кăмăлĕн пахалăхне тĕрĕслет. Çирĕп сывлăхлă та тĕрĕс воспитани илсе çитĕннĕ çамрăксем çак тĕрĕслеве лайăх тÿссе ирттерчĕç. Вĕсем фронтсенче историре пулман хăюллăн та паттăррăн çапăçса, Тăван çĕршыва чĕререн параса юратнине кăтартса пачĕç. Чылай физкультурниксем Совет Союзĕн Геройĕсен ятне тивĕçле пулчĕç.

Отечественнăй аслă вăрçă совет халăхĕ тăтăклăнах çĕнтернипе пĕтрĕ. Мирлĕ пурнăç пуçланчĕ. Халĕ ĕнтĕ спортпа физкультура ĕçне тата ытларах вăйлатмалла, çĕнĕ ÿсĕмсем тумалла.

Çак иртнĕ çулсенче пирĕн республикăри физкультурниксем хăйсен мастерлăхне ÿстерес тĕлĕшпе чылай пысăк çитĕнÿсем турĕç. Ĕçленине кура ĕçĕн результачĕ те пур. Физкультура уйрăмах колхозлă ялсенче анлăн саралса пырать. Иртнĕ хĕлре пулса иртнĕ колхоз çамрăкĕсен ăмăртăвне 50.865 çын хутшăнчĕ. Вĕсенчен 31.000 çын ГТО нормине пачĕ. Çак ăмăрту вăхăтĕнче республикăра 777 обществалла инструктор вĕрентсе хатĕрленĕ. 250 колхозра çĕнĕрен физкультура коллективĕсем тунă. Ăмăртура Шупашкар районĕнчи «Трактор» колхоз çамрăкĕсем мала тухнă. «Великан» колхозран (Хĕрлĕ Чутай районĕ) Е. Усикова юлташ çĕнĕ ÿсĕмсем тунă. Вăл физкультурниксен Пĕтĕм Союзри 3-мĕш категорине кĕме тивĕçлĕ пулса Пĕтĕм Союзри Физкультурăпа Спорт Комитечĕн хисеплĕ грамотине илчĕ. Пирĕн республика колхоз çамрăкĕсен ăмăртăвĕнче ССР Союзĕнче 5-мĕш вырăн йышăнчĕ. Ĕçри çитĕнÿсемшĕн республикăри комсомолпа физкультура организацийĕсем Пĕтĕм Союзри Физкультурăпа Спорт Комитечĕн хисеплĕ грамотине илнĕ.

Республикăра физкультура мероприятийĕсене массăллăн ирттерни физкультурниксен йышне ÿстерме пулăшать. Акă юлашки çулсенче ÿссе çитĕннĕ çамрăк физкультурниксем—Маркова, Полякова, Скородумова, Кубарева («Буревестник»), Матвеев, Талдыкин, Архипов («Спартак»), Шумолкин, Макарова, Шаркова («Сталинец») тата ыттисем те. Вĕсем хăйсен мастерлăхне тăтăшах ÿстерсе пыраççĕ.

Анчах та совет физкультурникĕсем тунă çитĕнÿсемпе лăпланса ларма пултараççĕ-и-ха? Паллах, çук. Физкультурăпа спорт халăх хушшинче анлăн саралса пытăр тесен, малашне пирĕн татах та ытларах тăрăшса ĕçлемелле. СССР Совнаркомĕ физкультурăпа спорт комитечĕсен ĕçĕсене лайăхлатасси тата вĕсене ĕçре пулăшса пырасси çинчен постановлени йышăнни те çавăн çинчех калать. Çак решени вăл физкультурăпа спорт ĕçне лайăхлатма, пирĕн çĕршыври миллионшар çамрăксене физкультурăпа спорт занятийĕсене явăçтарма, спорт мастерлăхне ÿстерме пулăшать.

Акă ĕнтĕ вăрçă хыççăнхи пĕрремĕш хĕл пуçланчĕ. Уйхирсемпе вармансем, стадионсемпе парксем шурă юрпа витĕнчĕç. Спортăн хĕллехи сезонĕ çитрĕ. Хастарлă çамрăксем йĕлтĕр çине тăрса уйхире, вăрмана тухĕç, хоккей вăййисем выляма стадионсене пуханĕç. Йĕлтĕр спортне пирĕн çамрăксем хытă юратаççĕ. Мĕншĕн тесен вăл çынăн сывлăхне тĕреклетет, ăна хăюллă та тÿсĕмлĕ пулма пулăшать. Йĕлтĕр спорчĕ анлăн саралса пытăр тесен, физкультура коллективĕсен малтанах хĕле хатĕрленсе çитни кирлĕ. Мĕнпур пек йĕлтĕр базисемпе стадионсене, катоксемпе трамплинсене юсамалла, физкультура коллективĕсенчи йĕлтĕрсене йĕркене кĕртсе çитермелле, харпархăйĕн йĕлтĕрсем тумалла.

Çакна халь хăшпĕр районсемпе обществăсенче çеç курма пулать-ха. Ку тĕлĕшпе Хĕрлĕ Чутай районне палăртса хăвармалла. Кунта хĕле хатĕрленес тĕлĕшпе хăшпĕр ĕçсене тума тытăннă та ĕнтĕ. Район центрĕнчи вăтам шкулта йĕлтĕр бази тунă, унта пурĕ 49 мăшăр йĕлтĕр пур. Хĕрлĕ Чутайри Варман хуçалăхĕнче кăçал 50 мăшăр, районри пионерсем 50 мăшăр йĕлтĕр тунă. Халĕ татах тăваççĕ. Чапаев ячĕпе тăракан колхозра Белов комсомолец ертсе пыракан физкультура коллективĕ йĕлтĕрсене пурне те юсаса хатĕрленĕ. Халĕ çамрăксем ялти пысăк пĕве çинче каток тума хатĕрленеççĕ. Хулари физкультура коллективĕсенчен «Спартак» обществи хĕле начар мар хатĕрленет. Кунта йĕлтĕр бази тумалли çурта юсаса ăшăтнă, чÿречисене лартнă, йĕлтĕр инвентарĕсене хатĕрленĕ. Халĕ каток тума хатĕрленеççĕ.

Анчах та республикăри чылай районсемпе хуласенче хĕле хатĕрленесси çителĕксĕр пулса пырать-ха. Вăл шута Шупашкарти «Сталинец», «Динамо», «Большевик», «Лесосплав» коллективсем кĕреççĕ. Улатăр, Канаш, Çĕмĕрле, Етĕрне хулисенче те катоксем тăвас тĕлĕшпе ĕçе тытăнман. Комсомол райкомĕсем те ку ĕçе тивĕçлипе ертсе пымаççĕ. Сăмахран, ВЛКСМ Иштей, Канаш, Первомайски, Пăрачкав райкомĕсем хĕле хатĕрленес ыйтăва хăйсен бюровĕсенче сÿтсе-явман, пуçламĕш комсомол организацийĕсен секретарĕсене те нимĕнле кăтартусем те паман.

Ĕçе тĕрĕс йĕркелеме пĕлсен, паллах, спорт сезонĕ ăнăçлăн иртме пултарать. Физкультура коллективĕсен хăйсен ретне çĕнĕ çынсене явăçтарма тăрăшмалла. Çамрăксене йĕлтĕрлĕ походсене, ăмăртусене юратма вĕрентмелле. Çавăн пек пултăр тесен, чи малтан фабрикăсемпе заводсенчи, колхозсемпе учрежденисенчи физкультура коллективĕсене çирĕплетмелле, вĕсен ĕçне вăйлатмалла.

Физкультурăпа комсомол организацийĕсен çамрăксене физически воспитани парас тĕлĕшпе спорт пропагандине вăйлатса пымалла, спорт ăмăртăвĕсем, конкурсем, лекцисемпе калаçусем туса ирттермелле.

Партипе правительство спорт ĕçне вăйлатса, халăха физически воспитани парассишĕн тăрăшать. Çакна совет çамрăкĕсем ăнланса илсе, партипе правительство тăрăшнипе çĕнĕ ÿсĕмсем тунипе ответлĕç.

В. М. МОЛОТОВ ЮЛТАШĂН ДОКЛАЧĔ ТАТАХ ТА ЛАЙĂХРАХ ĔÇЛЕМЕ ЧĔНЕТ

ВĂРНАР. (Телефонпа). Районри предприятисемпе колхозсенче Молотов юлташ 1945 çулхи ноябрĕн 6-мĕшĕнче Мускав Совечĕн чаплă ларăвĕнче тунă доклада радио тăрăх 3.600 çын ытла итленĕ.

Молотов юлташ докладне итлене хыççăн предприятисемпе колхозсенче митингсем пулса иртнĕ.

Нехорошев юлташ директор пулса ĕçлекен заводри рабочисем Молотов юлташ доклачĕпе хавхаланса, 1945 çулхи производство планне срокчен тултарма, ĕçсыннисен пурнăçне лайăхлатас тĕлĕшпе планран ирттерсе продукци туса кăларма обязательство илчĕç.

Кольцовкăри Сталин ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕн колхозникĕсемпе колхозницисем, государство умĕнчи парăмсене районра чи малтан татнăскерсем, сывăхри кунсенчех авăн çапса пĕтерме, ялхуçалăх инвентарĕсене юсама тата государство умĕнчи укçа-тенкĕ парăмĕсене халех парса татма обязательствăсем илчĕç.

* * *

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи колхозсенчи ĕçсыннисем В. М. Молотов юлташ Мускав Совечĕн чаплă ларăвĕнче 1945 çулхи ноябрĕн 6-мĕшĕнче тунă доклада тимлĕн итленĕ. «Коминтерн», «День урожая», «Агроном», «Профинтерн» колхозсенче тата ыттисенче те доклада пĕрле пухăнса итленĕ.

В. М. Молотов юлташ доклачĕ çине ответлесе, районри колхозниксемпе колхозницăсем авăн çапас, государствăна тырă парас тĕлĕшпе лайăхрах ĕçлеме обязательствăсем илчĕç.

* * *

Ноябрĕн 7-мĕшĕнче Сĕнтĕр районĕнчи «Колос» колхозра колхозниксен пĕрлешÿллĕ пухăвĕ пулса иртнĕ. Пухура 280 çын пулнă. Пухура пулнă колхозниксен шухăш-кăмăлне палăртса, Охлип колхозник çапла каланă:

— Молотов юлташăн историллĕ доклачĕ хамăрăн Тăван çĕршыва вăйлатассишĕн тата ытларах ĕçлеме, государство умĕнчи хамăрăн обязательствăсене вăхăтра пурнăçа кĕртсе пыма чĕнет, тенĕ.

Колхозниксемпе колхозницăсем сывăх вăхăтрах авăн çапса пĕтерме, государство умĕнчи обязательствăсене пурнăçлама пулчĕç, вăрлăх фондне тасатса хума, 1946 çулхи çураки валли ялхуçалăх инвентарьне юсама тытăнма йышăнчĕç.

МУСКАВ СОВЕЧĔН 1945 ÇУЛХИ НОЯБРĔН 6-МĔШĔНЧИ ЧАПЛĂ ЛАРĂВĔНЧЕ «ОКТЯБРЬТИ СОЦИАЛИЗМЛĂ АСЛĂ РЕВОЛЮЦИ 28 ÇУЛ ТУЛТАРНИ» ÇИНЧЕН В. М. МОЛОТОВ ТУНĂ ДОКЛАДА ПИЧЕТЛЕСЕ КĂЛАРНĂ

Государствăн Политика литератури кăларакан издательстви Мускав Совечĕн 1945 çулхи ноябрĕн 6-мĕшĕнче пулнă чаплă ларăвĕнче «Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 28 çул тултарни» çинчен В. М. Молотов тунă доклада уйрăм кĕнеке туса пичетлесе кăларнă.

Çав кĕнекене 5 миллион экземпляр пичетлесе кăларнă. (ТАСС).

Лайăх ĕçлекен ферма

ТĂВАЙ. Йăнтăрчри «Пламя» колхоз обществăллă выльăх-чĕрлĕх йышне тата унăн тухăçлăхне ÿстерес тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлет.

Ферма заведующийĕ И. Кондратьев юлташ чĕререн юратса ĕçленипе пула, «Пламя» колхоз обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана çулсеренех ирттерсе тултарать. Кăçал та план тăрăх колхозăн 125 сысна пулмалла пулсан, паянхи куна 200 пуçа çитернĕ.

Выльăх витисем пурте таса та юсавлă. Вĕсене лайăх юсаса, ăшă тытмалла тунă. Ферма работникĕсенчен уйрăмах О. Шакшаковăпа В. Савникова юлташсем лайăх ĕçлеççĕ, вĕсем кашниех кăçал пĕр сысна аминчен 12-шер çурă илнĕ.

Çавăн пекех сурăх ферминчи колхозниксем те лайăх ĕçлеççĕ. Вĕсем кăçал 90 сурăхран 118 путек илсе ÿстернĕ. Лайăх ĕçленĕшĕн О. Хайдуковăпа М. Тихонова юлташсене колхоз ĕçшĕн хушса 3-шер сурăх, 2-шер килограмм çăм панă.

Ĕне фермипче ĕçлекен Л. Саватьева та пăрусене пăхас тĕлĕшпе лайăх ĕçлет. Кăçал вăл 41 пăру пăхса ÿстерчĕ. Вăл пăхакан пăрусем мăнтăр та сывă. Пăрусене аван пăхнăшăн Л. Саватьева юлташа колхоз пĕр сысна парса премилерĕ.

Йышлă выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарма фермăра ĕçлекен работниксем хăйсен вăйĕпех пур тĕрлĕ выльăх апатне те çителĕклĕ хатĕрленĕ: 20 центнер армути, 15 центнер вĕлтрен, 10 лав çулçă, 25 лав путек çаппи, 270 центнер утă, 100 центнер выльăх кăшманĕ. 500 центнер çĕрулми хатĕрленĕ тата 190 тонна силос хывнă.

Колхоз государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем памалли обязательствăна сентябрь уйăхĕнчех тултарчĕ. 1946 çулшăн 11 центнер какай пачĕ. Çакăн пек лайăх ĕçленĕшĕн, райисполком фермăра ĕçлекенсене 700 тенкĕ укçа тата мануфактура парса премилерĕ.

Çавăн пекех «Новый путь», «Звезда» колхозсем те обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана вăхăтра тултарчĕç. Вĕсем выльăх витисене хĕле лайăх хатĕрленĕ, выльăх апачĕсене те çителĕклĕ таран пухнă.

Е. ТИМАКОВА.

Çамрăк выльăхсене пурне те тĕрĕс-тĕкĕл пăхса ÿстерер

СĔМĔРЛЕ. Обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана тултарас ĕçре çамрăк выльăхсене тĕрĕс-тĕкĕл пăхса ÿстерни пысăк вырăн йышăнса тăрать.

«Волга», «Молодая сила», Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсенче çамрăк выльăхсене типĕ, таса та аслă, çутă çуртйĕрсенче усраççĕ. Вĕсене лайăх пăхаççĕ, витесемпе ферма çурчĕсене тĕплĕн юсаса ăшă каймалла мар туса хатĕрлерĕç.

Анчах районри хăшпĕр колхозсенче выльăх-чĕрлĕх пăхас ĕçре зоотехникăпа ветеринари правилисене пурнăçласа пымаççĕ. Çавна пула «Красная звезда» колхозра кăçал лашасен йышĕ 8 пуç чакрĕ.

Çамрăк выльăхсене пĕтĕмĕшпех сыхласа хăварас тесен, вĕсене валли хĕл каçарма ăшă та çутă çуртсем, çителĕклĕ апат-çимĕç хатĕрлени кирлĕ. Анчах та «14 лет Октября» колхозра паянхи куна та ферма витисен алăкĕсене, кантăкĕсене, маччисене ăшă тытакан туса çитĕрмен, витери сывлăша уçăлтармалли трубасем те çук. Кĕсресем хăмламалли, ĕнесем пăруламалли, сыснасем çăвăрламалли пÿлĕмсене юсаса пĕтермен.

И. СОРОКИН.

5 ÇУЛ ХУШШИ ЧĂХ-ЧĔП ПĂХАС ĔÇРЕ

ИШЛЕЙ. Кипечкасси ял Советĕнчи «Большевик» колхозри колхозница Агапия Скворцова чăх-чĕп фермипче 5 çул хушши ĕçлет. Хăйĕн ĕçне вăл юратса тата тăрăшса туса пырать. Кĕркуннепе çуркунне чăх витине, вăлашкасене тата ытти ĕç хатĕрĕсене çулленех дезинфекцилесе тăрать.

Чăхсене Скворцова юлташ зоотехникăпа ветеринари правилисем тăрăх пăхса усрать.

Чăх-чĕпе тырăпа тăрантарнисĕр пуçне, витаминлă тата минераллă çимĕçсене: шăмă çăнăхĕ, вĕтĕ чул, утă ванчăкĕ, симĕс курăк тата ыттисене те парать.

Çапла майпа 1945 çулта чăх-чĕп ĕрчетес плана Скворцова юлташ 129 процент тултарнă, кашни чăхран вăл 73 çăмарта ытла илнĕ. Колхоз государствăна çăмарта парса татнă.

Чăх-чĕп ĕрчетес енĕпе тăрăшса ĕçленĕ хушăрах А. Скворцова ферма участокĕнчен çĕрулми туса илес тĕлĕшпе те лайăх ĕçлерĕ. Вăл кăçал хăй пĕччен 200 ĕçкунĕ ытла тунă.

— Çитес çул эпĕ чăх-чĕп пăхас тĕлĕшпе татах та лайăхрах ĕçлĕп,—тет Скворцова юлташ хăйĕн ĕçлес кăмăлне пысăккине палăртса.

В. ЧИГАРКИН.

Кок-сагыз мастерĕсем

Красноармейски районри «Красный Борденер» колхозри кок-сагыз туса илес тĕлĕшпе ĕçлекен бригадăна пирĕн республикăри колхозсем лайăх пĕлеççĕ. Çак бригадăна комсомолка Раиса Петрова ертсе пырать. Иртнĕ çул çак бригада кашни гектартан вăтам шутпа 22-шер центнер, уйрăм участоксенчен вара 26 центнер кок-сагыз тымарĕ пухса илнĕ. Петрова бригади кăçал 3,5 гектартан пĕтĕмпе 163 центнер кок-сагыз тымарĕ туса илчĕ. Уйрăм колхозницăсем харпăрхăй участокĕнчен 70 центнер таран кок-сагыз тымарĕ туса илнĕ.

Иртнĕ çулхи ĕçĕн итогĕсене пăхса тухнă хыççăн, Раиса Петрова юлташа хăйĕн ятне çырнă ылттăн сехет, ВЛКСМ Центральнăй Комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотисене парса наградăланă. Çав наградăсене илнĕ чухне Петрова юлташ кăçал татах та пикенерех ĕçлеме сăмах панăччĕ. Вăл хăйĕн сăмахне пурнăçларĕ. Унăн бригади кăçал кашни гектартан вăтам шутпа 50 центнер кок-сагыз тымарĕ пухса илсе, государствăна леçсе пачĕ.

ÇАМРĂКСЕНЕ ĔÇ РЕЗЕРВĔСЕН ШКУЛĔСЕНЕ ВĔРЕНМЕ ИЛЕС ĔÇЕ КĂТАРТНĂ ВĂХĂТРА ПУРНĂÇЛАР

СССР Совнаркомĕ йышăннă тăрăх, 1945 çулхи сентябрĕн 15-мĕшĕпе ноябрĕн 15-мĕшĕ хушшинче çамрăксене ремеслапа чугун çул училищисене тата ФЗО шкулĕсене вĕренме илеççĕ.

Ноябрĕн 5-мĕшĕ тĕлне пирĕн республикăра 1141 çамрăка вĕренме илнĕ, вĕсем халĕ вĕренме тытăннă та ĕнтĕ. Çамрăксене вĕренме мобилизацилес ĕç уйрăмах Октябрьски, Тăвай, Комсомольски, Елчĕк тата ытти хăшпĕр районсенче ăнăçлăн пулса пырать. Асăннă районсенче призыв комиссийĕсене вăхăтра организациленĕ, ку ĕçе тума районри актива явăçтарнă. Çак актив вăрă çамрăксене государствăн Ĕç резервисем çĕршывра мĕнле вырăн йышăнса тăни çинчен, çамрăксем шкулсенче илекен специальноçсем çинчен каласа ăнлантарнă. Çакăнпа пĕрлех ку районсенче вĕренме илекенсене валли кирлĕ документсем, тумтир тата урана тăхăнмалли япаласем вăхăтра хатĕрленĕ. Çамрăксене училищесемпе шкулсене йĕркеллĕ ăсатса янă.

Анчах та хăшпĕр районсенче чăтма çук япăх ĕçлеççĕ. Акă, Советски районра 60 ача вĕренме илес вырăнне, пурĕ те 6 ача кăна илнĕ, Вăрмар районĕнче 60 ача вырăнне 8 ача, Улатăр районĕнче 30 ача вырăнне 2 ача, Шăмăршă районĕнче 35 ача вырăнне 6 ача кăна вĕренме илнĕ. Çавăн пекех ку тĕлĕшпе Куславкка, Çĕрпÿ, Кувакино, Пăрачкав, Шăхасан районĕсем те япăх ĕçлеççĕ. Асăннă районсен руководителĕсем ку тарана çитсе те çамрăксене Ĕç резервисен шкулĕсене вĕренме илес ĕçĕн ответлăхне туйса илмен.

Вăрнар, Чкаловски, Чурачăк, Шупашкар тата ытти хăшпĕр районсенче çамрăксене шкула вĕренме илес йĕркене пăсса пыраççĕ. Çак районсенче çамрăксене документсемпе тумтирсĕр вĕренме кăларса яраççĕ. Тĕслĕхрен, Чурачăк районĕнчи çамрăксем Куславккари 2-мĕш номĕрлĕ ФЗО шкулне документсемсĕр, Калинино тата Вăрнар районĕсенчи çамрăксем çие тăхăнмалли тумтирсемпе урана тăхăнмалли япаласемсĕр пынă. Чăвашпотребсоюз та вĕренме каякан çамрăксене тумтирсемпе урана тăхăнмалли япаласем парса пулăшас тĕлĕшпе пачах та ĕçлемест.

Çамрăксене Ĕç резервисен шкулĕсене вĕренме илес вăхăт иртсе пырать. Çак юлнă вăхăтпа усă курса, çамрăксене училищесемпе ФЗО шкулĕсене вĕренме илес ĕçе хăвăртлатмалла, ноябрĕн 15-мĕшĕччен ку ĕçе пĕтĕмпех вĕçлемелле. Уйрăмăнах юлса пыракан районсен лайăхрах ĕçлемелле. Çамрăксене вĕренме кайнă чух йĕркеллĕ ăсатса ямалла, училищесемпе ФЗО шкулĕсенче вĕсене кĕтсе илмелле. Вĕсене çĕнĕ вĕренÿ çулне вăхăтра пуçламалла тăвас пулать.

Д. ПОЛЯКОВ,
Чăваш республикинчи Ĕç резервисен управленийĕн начальникĕ.

2.000.000 ТЕНКĔ ПУЛĂШУ

Первомайски районра кăçал фронтовик çемьисене 1.500 пин тенкĕ пособи, Отечественнăй вăрçă инвалидĕсене 500.000 тенкĕ пенси парса пулăшнă.

Çамрăксем суйлав Положенине вĕренеççĕ

Улатăрти предприятисенче, учрежденисенче, артельсенче, вĕренÿ заведенийĕсенче çамрăк суйлавçăсем—комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксем «СССР Верховный Советне суйламалли Положение» тăрăшса вĕренеççĕ.

«Красная швея» артельре суйлав Положенине вĕренес ĕçе чи лайăх стахановка-комсомолкăсем: Люба Архипова (комсомолăн пуçламĕш организацийĕн секретарĕ), Россейкина тата Шопова юлташсем ертсе пыраççĕ. Ку тарана çитсе «Положенин» 4 сыпăкне вĕреннĕ.

Паровозсем юсакан заводри комсомолецсем СССР Верховный Советне суйлама хатĕрленес тĕлĕшпе парти организацине пысăк пулăшу параççĕ.

Мелькомбинатри комсомол организацийĕнче суйлав Положенине вĕренме ятарласа кружок организациленĕ. Кружока комсомол организацин секретарĕ Чукланова юлташ ертсе пырать.

5-мĕш номер ФЗО шкулĕнчи çамрăк суйлавçăсене суйлав Положенине Николай Порфирьев воспитатель ăнлантарса парать. Çав организацири Комасова комсомолка килхуçи хĕрарăмĕсене пухса вĕсене суйлав Положенине ăнлантарса панă. Пирвайхи занятире 25 килхуçи хĕрарăмĕ пулнă.

«Красный восход» артельри çамрăк суйлавçăсем суйлав Положенипе СССР Конституцине кружокра вĕренеççĕ. Занятисем эрнере виçĕ хут пулса иртеççĕ. Кружока Кошелева комсомолка ертсе пырать.

Сталинла Конституципе суйлав законне вĕренес тĕлĕшпе 7-мĕш номерлĕ вăтам шкулта, махорка фабрикинче, пищекомбинатра, типографире, «Гигиена» артельре тата ытти организацисенче те кружоксем организациленĕ.

* * *

Çĕрпÿ районĕнчи çамрăксем суйлав Положенине хастарлăн вĕренеççĕ.

ВЛКСМ Çĕрпÿ райкомĕ тăвата çĕрте комсомол организацийĕсен секретарĕсемпе агитаторсен кустовой канашлăвĕсене туса ирттернĕ. Канашлусенче Совет Союзĕнчи суйлав системи çинчен доклад туса панă. Комсомолец-агитаторсем тата комсомол организацийĕсен секретарĕсем канашлусем хыççăнах ялсене тухса кайнă. Ялсенче вĕсем СССР Конституцине тата суйлав законне вĕренес тĕлĕшпе кружоксем организациленĕ.

«Цивильстрой» колхозра çавăн пек кружока вулав çуртĕн заведующийĕ Пушкина комсомолка ертсе пырать. Кашни занятиех 30—35 çын çÿрет. Суйлав законне колхозниксене ăнлантарса парас тĕлĕшпе ĕçлеме 13 комсомолеца уйăрнă. Андреева, Осипова, Александров, Иванова тата ытти комсомолецсем час-часах колхозниксем патне çÿресе вĕсене суйлав çинчен ăнлантарса параççĕ. Колхозри вулав çуртĕнче «Суйлавçăсен кĕтесси» организациленĕ, унта ялапах агитаторсем пулаççĕ. Çавăн пекех кунта суйлава хатĕрленес тĕлĕшпе ятарласа витрина организациленĕ.

«Ильич» колхозра 6 комсомолец тăтăшах колхозниксем хушшинче Совет Союзĕн Конституцийĕпе суйлав законĕ çинчен интереслă калаçусем ирттереççĕ.

«Пушанар», «Балтиец», «Глиссер», «Красный этновец» колхозсенче СССР Верховный Советне суйлас ĕçе пĕрремĕш хут хутшăнакан çамрăксен кружокĕсене организациленĕ.

Агрокультура çурчĕ

Вăрнар районĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем йышăннă тăрăх, кăçал Вăрнар поселокĕнче Агрокультура çурчĕ тума йышăннă. Халĕ вăл çурта туса лартнă. Çуртра районри çĕрĕç пĕлÿ, вăрлăх тĕрĕслекен лаборатори, агрономсемпе зоотехниксем тата ветеринари работникĕсем ĕçлеççĕ. Колхозниксемпе колхозницăсен кунта хăйсене кирлĕ канашсемпе пулăшу илеççĕ.

Совет çĕршывĕ тăрăх

И. П. ПАВЛОВ ЯЧĔПЕ ФИЗИОЛОГСЕН КОНФЕРЕНЦИЙĔ ПУЛСА ИРТЕТ

Мускаври физиологсен обществи аслă вырăс физиологĕ И. П. Павлов академик вилнĕренпе 10 çул тултарнă май физиологсен конференцине пухма оргкомитет тунă. Çав конференци иртнĕ вунă çул хушшинче совет физиологĕсем тата ют çĕршывсенчи физиологсем тунă наукăпа тĕпчев ĕçĕсене пăхса тухмалла.

Конференцие физиологсемсĕр пуçне тата клиникăсенче И. П. Павлов вĕрентнĕ тăрăх ĕçлекен ученăй-медиксене те чĕнме йышăннă. (ТАСС).

Н. А. НЕКРАСОВĂН ХВАТТЕР-МУЗЕЙНЕ УÇМА ХАТĔРЛЕНЕÇÇĔ

Н. А. Некрасовăн Литейнăй проспектри 36-мĕш çуртри хваттер-музейне уçма хатĕрленеççĕ. Çав хваттерте аслă вырăс поэчĕ 20 çул ытла пурăннă. «Современник» редакцийĕ те çавăнтах ĕçленĕ; редакцие Добролюбов, Тургенев, Успенский, Салтыков-Щедрин тата ытти чи паллă писательсем час-часах çÿренĕ.

Н. А. Некрасов хваттер-музейне çĕнĕ план тăрăх йĕркелеççĕ. Наука академийĕн Пушкин çуртĕн Литература музейĕ çав хваттер валли «Современник» вăхăтĕнче пулнă сĕтел-пукансене уйăрса панă.

Некрасов кабинетне хăй пурăннă вăхăтĕнчи пекех йĕркелесе лартаççĕ. Поэтăн çырса лармалли сĕтелне тата унăн кабинетĕнчи ытти тĕрлĕ сĕтел-пукансене вăрçă вăхăтĕнче Пушкин çуртĕнче сыхласа усранă.

Н. А. Некрасов хваттер-музейне вăл çуралнăранпа 125 çул тултарнă кун тĕлне уçаççĕ. (ТАСС).

Ÿкерчĕк çинче: Сталинградри Ленин орденлĕ тата Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ трактор заводĕнче трактор пайĕсене хатĕрлеççĕ.
П. СИГНИКОВ фотоÿкерчĕкĕ. (ТАСС фотохроники).

УКРАИНĂРИ КОЛХОЗСЕМ ВАЛЛИ 400 ЛОКОМОБИЛЬ ТУСА КĂЛАРНĂ

Сызраньри локомобиль заводĕн коллективĕ савăнать. Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 28 çул тултарнине тивĕçлипе кĕтсе илессишĕн ăмăртса ĕçлесе, ноябрĕн 4-мĕшĕнче рабочисем пăс вăйĕпе ĕçлекен 400-мĕш локомобиле туса кăларнă. Çав локомобиль кăçалхи план тăрăх тумалли юлашки локомобиль пулнă. Правительство хушнă тăрăх, кăçалхи январь уйăхĕнче Украинăри колхозсем валли 25 лаша вăйлă локомобильсем тума тытăннă. Сызраньри рабочисем вĕсене часах йышлăн туса кăларма пуçланă.

Сызраньри завод туса кăларнă темиçе çĕр локомобильпе Украинăри ялхуçалăхĕнче анлăн усă кураççĕ. Вĕсем унта арман авăртнă çĕрте, электростанцисенче тата тырă çапнă çĕрте ĕçлеççĕ. Вĕсем торф, сланец тата çĕркăмрăкĕ çунтарса ĕçлеççĕ. Ăмăртура мала тухнă кадровăй рабочисем Фирсов, Пыбин, Шлепков, Богомолов тата çамрăк стахановецсем Захаровпа Гусев çав 400-мĕш локомобиле пухма право илнĕ.

Завод коллективĕ Украинăри колхозсем валли планран ирттерсе 100 локомобиль туса пама сăмах панă.

ЗАЕМ ВЫЛЯВĔСЕМ

Ноябрь уйăхĕнче Мускавра заемсен тăвата вылявĕ пулса иртет. Ноябрĕн 15-мĕшĕнче Виççĕмĕш пятилетка заемĕн икĕ вылявĕ пулать: пĕр вылявĕ—çав заемăн пĕрремĕш çулхи кăларăмĕн, тепĕр вылявĕ—иккĕмĕш çулхи кăларăмĕн. Ноябрĕн 30-мĕшĕнче Виççĕмĕш пятилетка заемĕн тăваттăмĕш çулхи кăларăмĕн вылявĕ пулса иртет.

Çак вылявсенче кашнинчех 3.000 тенкĕлĕх выигрышсем 200-шер пулаççĕ.

Ноябрĕн 25-мĕшĕнче Государствăн 1938 çулхи заемĕн вылявĕ пулса иртет. (ТАСС).

ПĔЧĔК ГИДРОЭЛЕКТРОСТАНЦИСЕН ПРОЕКЧĔСЕМ

Пирĕн çĕршывра пĕчĕк гидроэлектростанцисем нумай тăваççĕ. Çав электростанцисене тăвакансен (колхозсен, совхозсен, МТС-сен, районсенчи тĕрлĕ организацисен) халиччен техникăлла ыйтусене—электростанцисене ăçта лартмаллине, вĕсене мĕн чухлĕ хăватлă тумаллине, вĕсем валли мĕнле оборудовани кирлине тата ыттине те—хăйсен татса памалла пулнă. Вĕсене пулăшма халь СССР Электростанцисен Халăх Комиссариачĕн «Гидроэнергопроект» трестĕн 1-мĕш бюровĕ, В. Ф. Ярош главнăй инженер ертсе пынипе, гидроэлектростанцисен типовой проекчĕсене туса хатĕрленĕ. Çав электростанцисен оборудованине ансатрах пулать. Электростанцисем тума чухне йывăçпа, чулпа, саманпа тата ыттипе те ытларах усă курмалла пулать. Проектсемпе пĕрле вĕсене техника енчен те, смета енчен те ăнлантарса панă текстсем çырса хатĕрленĕ. (ТАСС).

СССР КОНСТИТУЦИЙĔ СИНЧЕН КАЛАÇУСЕМ

Совет государстви

ОКТЯБРЬТИ СОЦИАЛИЗМЛА АСЛА РЕВОЛЮЦИ

Ĕлĕкхи, революцичченхи Российăра помещиксемпе капиталистсем пуçпулса тăна. Государство влаçе патша-«самодержец» аллинче пулнă. Правительство органĕсем, полици, жандармери, çар, судсем, тĕрмесем дворянсен, помещиксемпе капиталистсен аллинче пулнă. Массăсен шухăш-кăмăлне пăхăнтарса тăмалли шкулпа чиркÿ те вĕсен аллинчех пулна.

Рабочисемпе хресченсем пусмăрлăхра пурăннă: вĕсене помещиксемпе капиталистсем эксплоатацилене. Рабочисемпе хресченсен прависем те пите хĕсĕк пулнă. Вĕсем хăйсен мĕнпур ĕмĕрĕ тăршшĕ харамçыр помещиксемпе капиталистсемшĕн ĕçлесе пурăннă.

Халăх хисепĕ тĕлĕшĕнчен илсен, вырăс мар халăхсем Российăра çурри ытла пулнă, вĕсене вара пушшех те хытарах пусмăрланă. Патша правительстви çав вырăс мар халăхсене «кĕçĕн расса» çыннисем тесе шутланă, мăшкăлласа вĕсене «инородецсем» тесе чĕннĕ, вĕсене этеме тивĕç чи ансат правасене те паман. Вăл нацисем хушшинчи тăшманлăха вичкĕнлетсе пына, çĕршывра хуçаланма ансатрах пултăр, ĕççыннисене пусмăрлама çăмăлтарах пултăр тесе, пĕр халăха тепĕр халăхпа харкаштарнă.

Вырăссен малтанхи революцийĕ 1905 çулта пулнă. Ун чухнех малтанхи Советсене туса хунă; çав Советсем ĕнтĕ рабочисен восстанине ертсе пыракан органсем, çĕршыври çĕнĕ, революциллĕ влаçăн пуçламашĕсем пулса тăраççĕ. Патша правительстви ун чухне революциллĕ юхăма аран-аран парăнтарма май килнĕ, вăл вара халăх ыйтăвне тивĕçтеренçи туса халăх правительствин мĕскĕн евĕрлехне—государство думине туса хунă.

Патша правительствине 1917 çулхи февраль уйăхĕнче халăх революцийĕ сирпĕнтерсе антарнă. Çĕршывра пур çĕрте те Советсем организациленĕ. Анчах та государство влаçне ун чухне, 1917 çулхи çуркунне, буржуази хăй аллине тытса илнĕ. Буржуази правительстви вара революциллĕ рабочисемпе хресченсене хирĕç наступлени пуçласа янă.

Большевиксен партийĕ массăсене контрреволюципе хирĕç кĕрешме, рабочисемпе хресченсен влаçĕшĕн кĕрешме организациленĕ. 1917 çулхи октябрĕн 25-мĕшĕнче (ноябрĕн 7-мĕшĕнче) Петроградра рабочисемпе салтаксем большевиксем ертсе пынипе хĕçпăшаллă восстани пуçласа янă та буржуази правительствине сирпĕнтерсе антарнă. Çав кунах Петроградра Советсен Пĕтĕм Российăри Съезчĕ уçăлнă. Халăха вăл çапла чĕнсе каланă:

«Рабочисен, салтаксен тата хресченсен калама çук пысăк ытларахăшĕн ирĕкĕ çине таянса, Петроградра рабочисемпе гарнизонăн пулса иртнĕ çĕнтерÿллĕ восстанийĕ çине таянса, Съезд влаçа хăй аллине илет».

Çапла ĕнтĕ, Октябрьти Социализмлă Аслă Революципе пула пирĕн çĕршывра государство влаçĕ Советсен аллине куçрĕ, вара Совет государстви пулса тăчĕ.

СОВЕТСЕМ

Советсем вĕсем чи массăллă, пурне те пĕтĕçтерсе тăракан, пур ĕççыннисене те пĕрлештерсе тăракан государствăллă организаци пулса тăраççĕ. Советсен ларăвесенче вырăспа эстонец, белоруспа туркмен, украинецпа ойрот, латышпа коми, вата большевикпа партире тăман колхозник, пĕтĕм тĕнчипе паллă ученăйпа пуçламĕш шкултан çеç вĕренсе тухнă рабочи, сталеварпа кĕтÿçĕ, ткачихăпа доярка, железнодорожникпе летчик тата ыттисем те пĕр-пĕринпе юнашар ларса пĕртан тивĕçпе ĕç татса параççĕ.

Советсене халăх пурне те тивĕç, пĕртан тата тÿрех çасăламалли правапа вăрттăн сасăласа суйлаççĕ. Совет гражданĕсем хăйсен суйлав прависене нимĕнле майпа хĕсние те пĕлмеççĕ. Буржуаллă çĕршывсенче вара рабочисемпе хресченсен чылай пысăк пайĕ суйлав правине туллин усă кураймасть, теприсене тата пачах та суйлав прависĕр тăратса хăварнă. Пирĕн çĕршывра пур Советсене те (ял Советĕнчен пуçласа Верховный Совета çитиех) пур гражданăсен те, арçынне-хĕрарăмне, хăш наци е расса çынни пулнине, мĕнле тĕн тытнине, мĕн чухлĕ вĕреннине, мĕнле класран тухнине, пурлăхĕ мĕнлине, ĕлĕк мĕн ĕç туса пурăннине, пĕр вырăнта пурăннипе пурăнманнине пăхмасăр пурин те суйлама та тата суйланма та пĕртан права пур. Паллах ĕнтĕ, ăсран тухнисен тата судпа айăпласа суйлав прависĕр хăварнă çынсен çеç суйлав прави çук.

Пирĕн Советсене пурне те çак суйлав системипе—тĕнчери чи демократиллĕ суйлав системипе суйланă. Çак суйлав системипе ĕнтĕ 1946 çулхи февралĕн 10-мĕшĕнче совет гражданĕсем СССР Верховный Советне çĕнĕрен суйлаççĕ.

Суйлавçăсем хăйсен депутатне Советра мĕнле ĕçлемелли çинчен наказ параççĕ. Депутатăн хăйĕн ĕçĕ çинчен хăйне суйланă суйлавçăсем умĕнче отчет туса памалла. Депутат хăйне шанса панă ĕçе тÿрре кăлараймасть пулсан, суйлавçăсем ăна каялла чĕнсе илсе, ун вырăнне урăх çынна суйлама пултараççĕ.

Чи аякри ялсенче те, кашни хулара, районра, облаçре ĕççынни депутачĕсен хăйсен Совечĕсем пур. Вырăнти Советсем хăйсен Исполнительный Комитечĕсене суйлаççĕ, вĕсем хăйсен ĕçĕнче пĕтĕмпех çав хăйсене суйланă Советсем умĕнче ответлă пулса тăраççĕ. Исполнительный Комитетсем вырăнти государство управленийĕн отраслĕсене ертсе пыма пайсем тăваççĕ. Тĕслĕхрен, вырăнти Советсен Исполнительный Комитечĕсенче çакăн пек пайсем пулаççĕ: халăх сутĕç пайĕ, сывлăх, вырăнти промышленность, суту-илÿ, финанс, çĕрĕç, социальнăй обеспечени пайĕсем тата ыттисем те. Пĕчĕк ялсенче Исполнительный Комитет председательпе, унăн заместителĕнчен тата секретарьтен тăрать.

Вырăнти Советсем вырăнти хуçалăхпа культура тата политика тĕлĕшĕнчи ыйтусене хăйсемех татса пама пултараççĕ. Вĕсем хăйсен территорийĕнче государство йĕркелĕхне сыхлаççĕ, законсене пурнăçа мĕнле кĕртсе пынине тĕрĕслеççĕ, гражданĕсен прависене хÿтĕлеççĕ, çĕршывăн оборона тĕлĕшĕнчи вăй-хăватлăхне çирĕплетсе пыраççĕ. Вырăнти Советсен тупăш илмелли хăйсен çăлкуçĕсем пур, вĕсем хăйсен бюджетне (тупăшсемпе тăкаксен сметине) туса хатĕрлеççĕ.

Ĕççынни депутачĕсен Совечĕсем Советсене ĕçре пулăшса пымашкăн ялан ĕçлекен комиссисем суйлаççĕ. Советсем çумĕнчи ялан ĕçлекен комиссисем тата ытти нумай организацисем те Советсене суйлавçăсемпе, халăхпа таччăн пĕтĕçтерсе тăраççĕ, ĕççыннисен сарлака массисене, государство управленийĕн ĕçне анлăн явăçтараççĕ.

Çапла ĕнтĕ, Советсем вĕсем халăх массисене чи сывăх та тăван чăн-чăн демократиллĕ власть пулса тăраççĕ.

Советсем вĕсем—государствăллă çĕнĕ организаци; пирĕн çĕршыврисĕр пуçне, ун пек организаци урăх ниçта та пулман та, çук та. Советсем капитализмлă çĕршывсенчи государствăллă организацисенчен тĕпренех уйăрăлса тăраççĕ. Унта конституцисенче час-часах демократи çинчен калаçаççĕ, анчах чăннипе вара государство влаçĕн органĕсене халăха пусмăрлама, ĕççыннисене эксплоатацилеме, капиталистсемпе помещиксен интересĕсене хÿтĕлеме туса хунă. Советсем вара пачах та урăхла. вĕсем ĕççыннисене кирек епле пусмăрлăхран та пĕтĕмпех ирĕке кăларчĕç; Советсене ĕççынни массисене хÿтĕлеме, вĕсен интересĕсене тивĕçтерсе пыма туса хунă.

1919 çул пуçламĕшĕнчех Ленин Советсем пирĕн çĕршывра государство влаçĕн мĕнпур яланхи тата пĕртен пĕр никĕсĕ пулса тăчĕç, тесе çырнă.

Ĕççынни депутачĕсен Совечĕсем Совет Союзĕн политикăллă никĕсне туса хураççĕ.

СОВЕТ РЕСПУБЛИКИ

Пирĕн Конституци тăрăх. вырăнти Советсем государство влаçĕн вырăнти органĕсем пулса тăраççĕ. Вырăнти Совет вăл—ячейка, пĕр пĕтĕмĕшлĕ Совет влаçĕн пайĕ.

Пирĕн çĕршывра кирек хăш республикăна илĕр,—унта эсир çакна куратăр: унта вырăнти пур Советсем те пĕр пĕтĕмĕшлĕ нациллĕ-государствăллă организаци пулса тăраççĕ. унта кашни Советăн хăйĕн вырăнĕ, хăйĕн прависем, хăйĕн полномочийĕсем пур. Çакăн пек пĕрлешÿ ĕнтĕ Совет Республики пулса тăрать.

Тĕслĕхрен, Белоруссири Совет влаçне илер. Кунта вырăнти пур Советсем те пĕр пĕтĕмĕшлĕ нациллĕ-государствăллă организаци—Белорусси Советлă Социализмлă Республики пулса тăраççĕ, унăн пуçĕнче вара çав республикăн Верховный Совечĕ тăрать. Совет Эстонийĕнче те вырăнти пур Советсем те пĕр-пĕтĕмĕшлĕ нациллĕ-государствăллă организаци—Эстони Советлă Социализмлă Республики пулса тăраççĕ, унăн пуçĕнче те вара çав республикăн Верховный Совечĕ тăрать. Ытти республикăсем тĕлĕшпе те ĕç çавăн пекех пырать.

Пирĕн Советлă аслă çĕршыв, пĕтĕмĕшпе илсен, нацисен Совет Республикисенĕ нумай нациллĕ пĕр пĕтĕмĕшлĕ Совет государствине—Советлă Социализмлă Республикăсен Союзне пĕрлештерни пулать, унăн пуçĕнче СССР Верховный Совечĕ тăрать.

Совет влаçĕ вăл—ĕççыннисен влаçĕ пулса тăрать. Ун çинчен Совет Союзĕн Конституцийĕнче пите уçăмлă каланă:

«СССР Союзĕнче пĕтĕм власть ĕççынни депутачĕсен Совечĕсем урлă хулапа ял ĕççыннийĕсен аллинче тăрать».

Ытти пур совет республикисен конституцийĕсенче те ун çинчен çавăн пекех каланă.

Çапла ĕнтĕ. хулапа ял ĕççыннисем суйланă Советсем кашни Советлă социализмлă республикăра мĕнпур государство влаçне, Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕнчи мĕнпур государство влаçне пурнăçа кĕртсе пыраççĕ.

Хамăрăн государство çинчен совет гражданĕсем тивĕçлипе мухтансах çапла калаççĕ ĕнтĕ:

— Пирĕн государство вăл—эпир хамăр!

Совет государстви ытти пур государствăсенчен те тĕпрен çакăнпа уйрăм тăрать: совет государствин никĕсĕнче рабочисемпе хресченсен массăллă организацийĕ тăрать; пирĕн çĕршывра вĕсем ирĕклĕ, хăйсен çĕршывне хăйсем тытса пыраççĕ. Капитализмлă çĕршывсенче вĕсене пусмăрланă, эксплоатаци путлантарнă.

(Юлашки пулать).

СОВЕТ УЧЕНĂЙĔ—ВЕЛИКОБРИТАНИПЕ ИРЛАНДИРИ ХИРУРГСЕН АССОЦИАЦИЙĔН ХИСЕПЛĔ ЧЛЕНĔ

Мускаври Скалифасовский ячĕпе тăракан институтăн главнăй хирургне, СССР Медицина наукисен академийĕн действительнăй членне С. С. Юдин профессора Великобританипе Ирландири хирургсен ассоциацийĕн хисеплĕ членне суйланă. Ăна суйланине ассоциацин çулталăкри ларăвĕ çирĕплетнĕ. Кунсăр пуçне, С. С. Юдин профессор Англири хирургсен король обществин хисеплĕ членĕнче тăрать, ăна унта 1943 çулта çулла суйланă. (ТАСС).

Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 28 çул тултарнă ятпа тунă йышăнусем

БУХАРЕСТ, ноябрĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Ноябрĕн 7-мĕшĕнче Совет Союзĕн Румынири посольствинче Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 28 çул тултарнă ятпа йышăну туса ирттернĕ. Йышăнура Румыни государство деятелĕсем, премьер-министр П. Гроза доктор тата вице-премьер Г. Татареску, Америкăпа Англи миссийĕсен представителĕсем, дипломати корпусĕн членĕсем, Румыни общество, политика тата экономика работникĕсем тата ыттисем те пулнă.

ОТТАВА, ноябрĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Ноябрĕн 7-мĕшĕнче Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 28 çул тултарнă ятпа Канадăри Совет посольствинче тунă йышăнура правительствăпа парламент членĕсем, дипломати корпусĕн представителĕсем, Канадăн хĕçпăшаллă вăйĕсен аслă генералĕсем, Канадăри хаçатсен представителĕсем тата Оттаварн, Торонтори, Монреальри паллă деятельсем пулчĕ.

КАИР, ноябрĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Ноябрĕн 7-мĕшĕнче Египетри Совет миссийĕнче Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 28 çул тултарнă ятпа йышăну туса ирттернĕ. Йышăнура Египет премьер-министрĕ Покраши-паша, Египет правительствин членĕсем, дипломати корпусĕ, обществăпа чиркÿ организацийĕсен, наукăсен, хаçатсен тата ыттисен представителĕсем пулнă, çавăн пекех тата Ирак премьер-министрĕ Хамди-аль Пачачи, тата Англипе Америка çарĕсен генералĕсемпе офицерĕсем пулнă.

БЕЙРУТ, ноябрĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 28 çул тултарнă ятпа Совет Союзĕн Ливанри миссийĕнче йышăну пулса иртнĕ. Йышăнура премьер-министр Сами Сольх, Ливан правительствипе парламенчĕн членĕсем. обществăпа политика работникĕсем, çавăн пекех тата дипломати корпусĕн членĕсем пулнă.

ОСЛО, ноябрĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Ноябрĕн 7-мĕшĕнче Совет Союзĕн Норвегири посольствинче Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 28 çул тултарнă ятпа йышăну пулса иртнĕ. Йышăнура кронпринц, Олаф, премьер-министр Герхардсен, Норвеги правительствин членĕсем, стортинг членĕсем, Норвегин обществăпа политика тата культура деятелĕсем, союзниксен командованийĕпе Норвеги командованийĕ тата дипломати корпусĕ пулнă.

СТОКГОЛЬМ, ноябрĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 28 тултарнă ятпа Совет Союзĕн Швецири миссийĕнче йышăну пулса иртнĕ. Йышăнура суту-илÿ министрĕ Мюрдаль, Швеци çарĕпе флочĕн тата авиацийĕн представителĕсем, çавăн пекех тата паллă политика деятелĕсем, экономика, интеллигенци тата хаçат представителĕсем пулнă.

ПРАГА, ноябрĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Ноябрĕн 7-мĕшĕнче Чехословакири Совет посольствинче Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 28 çул тултарнă ятпа йышăну пулса иртнĕ. Йышăнура премьер-министр Фирлингер, Чехословаки правительствин членĕсем, Вăхăтлăх наци пухăвĕн председателĕ Давид, дипломати корпусĕн представителĕсем, Хĕрлĕ Çаран генералĕсемпе офицерĕсем тата Прагари обществăпа культура представителĕсем пулнă.

ВЕНА, ноябрĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Совет Союзĕн Австрири оккупаци çарĕсен Главнокомандующийĕ Конев Маршал Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 28 çул тултарнă май йышăну туса ирттернĕ. Йышăнура хăнасем нумай пулнă, вăл шутра союзниксен командованийĕн представителĕсем, Австрин обществăпа политика деятелĕсем, ученăйсем, артистсем, журналистсем пулнă.

Кунсăр пуçне, государство канцлерĕ Карл Реннер доктор, Австрин Вăхăтлăх правительствин мĕнпур членĕсем тата Кăнтăр Австрипе Бургенланд правительствисем пулнă.

БЕЛГРАД, ноябрĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Ноябрĕн 7-мĕшĕнче Совет Союзĕн Югославири посолĕ Садчиков юлташ Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 28 çул тултарнă ятпа йышăну туса ирттернĕ. Йышăнура регентсем, Тито Маршал, Рибар доктор, Югославипе Серби правительствисен членĕсем, вăхăтлăх халăх скупщинин президиумĕн членĕсем тата депутачĕсем, Сербин халăх скупщинин депутачĕсем, дипломати корпусĕ, Югослави партисен лидерĕсем, Совет Союзĕпе культура енчен çыхăнса ĕçлекен обществăн членĕсем, Югослави çарĕн генералĕсемпе офицерĕсем, наукăпа культура представителĕсем тата журналистсем пулнă.

БЕРЛИН, ноябрĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Совет Союзĕн Германири оккупаци çарĕсен главнокомандующийĕ тата Германири совет çар администрацийĕн главноначальствующийĕ Совет Союзĕн Маршалĕ Жуков ноябрĕн 7-мĕшĕнче Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 28 çул тултарнă ятпа йышăну туса ирттернĕ. Йышăнура Хĕрлĕ Çарăн, Пĕрлешÿллĕ Штатсен, Англин тата Францин Берлинри гарнизонĕсен генералĕсемпе офицерĕсем. Совет Союзĕн тата союзниксен Германири çар администрацийĕн деятелĕсем тата Совет Союзĕпе ют çĕршывсенчи хаçатсен представителĕсем пулнă.

Мускав Совечĕн чаплă ларăвĕнче В. М. Молотов тунă доклад çинчен ют çĕршывсенче мĕн çыраççĕ

ЛОНДОН, ноябрĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Англин информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, Лондонри обозревательсем Англире В. М. Молотов доклачĕпе пите интересленнине тата ăна анлăн сÿтсе явнине палăртаççĕ. Çавăн пек чухне официальнăй йеркепе ăнлантарса паракан чĕ, халь апла туман, çавăнпа та Молотов доклачĕ, пĕтĕмĕшпе илсен, Англи халăхне кăмăла кайнă, тесе калама пулать. Молотов ют çĕршывсем тĕлĕшпе тăракан задачăсем çинчен каланă чухне чи малтан «миршĕн тăрăшасси çинчен тата пĕтĕмĕшле мир тăвас тесе ытти çĕршывсемпе килĕштерсе ĕçлесси çинчен» каланă. Информаци министерствин пĕлтерĕвĕнче малалла çапла каланă: Молотов, Крымри декларацин пĕр вырăнне илсе кăтартса, çапла каланă: Крымри конференцин решенийĕсĕне пурнăçа кĕртмешкĕн нумай ĕçлемелле пулать-ха, тенĕ. Молотов, уйрăм илсе кăтартсан, Европăри ирĕке кăларнă çĕршывсене ура çине тăратасси çинчен йышăннă решенисене аса илсе каланă пулмалла. Крымри декларацие «çак вăрçăра çĕнтерме май туса панă тĕллевсемпе ĕçсен пĕрлĕхне çитĕс мирлĕ тапхăрта та сыхласа тăрса вайлатма тăрăшмалла» тенĕ сăмахсемпе вĕçленĕччĕ. Çак сăмахсем Молотов доклачĕн тĕп шухăшĕ пулса тăчĕç пулмалла. Молотов икĕ хутчен çапла каланă: Англипе Совет Союзĕн тата Пĕрлешÿллĕ Штатсен коалицийĕ, вăрçă вăхăтĕнче çуралса ÿснĕскер, мирлĕ вăхăтра тĕрĕсленет. Çав тĕрĕслеве ăнăçлăн тÿссĕ ирттересси пирки Молотов хăйне итлекен çынсене пĕртте иккĕлентермен.

Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен конференцийĕ ăнăçсăр пĕтни çинчен Молотов çапла каланă: вăл йывăрлăхсем ĕçе пĕтерсе лартмалли йывăрлăхсем мар, ун пек йывăрлăхсем ĕлĕк те пулкаланă, тенĕ.

Хĕвеланăçĕнчи блок пирки, атом бомбин секречĕ пирки, Японири контроль совечĕ пирки тата Хĕвелтухăç Европăри çĕршывсем тĕлĕшпе тытса пымалли политика пирки Молотов вырăссен политикин паллă принципĕсене тепĕр хут çирĕплетсе панă.

Лондонри обозревательсем кун çумне çапла хушса калаççĕ: вырăссен политикин тĕп принципĕсем çинчен пĕлтерни (вĕсем çинчен Октябрьти революци уявĕ кунĕнче пĕлтереççĕ) кирек хăçан та пĕтĕм тĕнчешĕн çав тери паха документ пулса тăрать. Молотовăн пите тĕплĕн шухăшласа каланă сăмахĕ те çавăн пекех пулса тăрать, ăна та тимлĕн вуласа вĕренĕç.

НЬЮ-ЙОРК, ноябрĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер каçхи радиопередачăсенче В. М. Молотов доклачĕн тĕп шухăшĕсем çинчен темиçе хут та кĕскен каласа панă. Анчах нумай обозревательсем вăл доклада ăнлантарса пама тăрăшман, паллă радиокомментатор Сунинг çапла çеç каласа хунă: Молотов доклачĕ ытти государствăсенчен парăнасси çинчен каламасть, тенĕ. Унтан Сунинг Молотов доклачĕн тĕп шухăшĕсем çинчен тĕплĕн каласа панă.

Радиокомментатор Серджио çапла каланă: Молотов атом бомби пирки, уйрăмах та çав бомба ыйтăвĕпе дипломатире усă курма хăтланни пирки «чăн сăмах» каланă. Хăшпĕрисем çавăн пек хăтланкалани çинчен уççăнах каласа пани вăхăтра калани пулать. Атом энергине вăрттăн тытса усрама çук, ун çинчен никама та пĕлтермесĕр тăма пулĕ тесе шухăшлани кулăшла шухăш пулать. Молотов тÿррĕн каласа пани—кирлĕ сăмах, çакă Совет Союзĕн тусĕсен хисепне ÿстерет. Анчах та Совет Союзĕ ытти государствăсенчен пăрăнса тăрас çулпа каймасть. Молотов пĕтĕм тĕнчери организаци кирлине палăртса панă.

Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 28 çул тултарни çинчен Югославири хаçатсем мĕн çыраççĕ

БЕЛГРАД, ноябрĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Белградри радио пĕлтернĕ тăрăх, Белградра тухакан мĕнпур хаçатсем ирĕклĕхе юратакан халăхсен праçникĕ çинчен — Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 28 çул тултарни çинчен—нумай çыраççĕ. Пур хаçатсем те пĕрремĕш страницăсенче В. М. Молотов докладне пĕтĕмĕшпех пичетленĕ; Ленинпа Сталинăн нумай фотоÿкерчĕкĕсене пичетленĕ. Югославири коммунистсен партийĕн «Борба» ятлă хаçачĕ «Сывă пултăр Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 28 çул тултарни» ятлă умстатья пичетлесе кăларнă. «Октябрьти Социализмлă Аслă Революцин историллĕ пĕлтерĕшĕ этемлĕх кунçулĕшĕн мĕн тери паха пулни паян, вăрçă хыççăн ноябрĕн 7-мĕшне пĕрремĕш хут уявланă кун, нихăçанхинчен те лайăхрах курăнса тăрать, вăл паян çынсен пуçĕпе чĕри патне нихăçанхинчен те çывăхрах», тенĕ çав умстатьяра.

ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ÇАМРĂКСЕН КОНФЕРЕНЦИЙĔ

ЛОНДОН, ноябрĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Пĕтĕм тĕнчери çамрăксен конференцийĕнче ĕнер кун йĕркинчи пĕрремĕшпе иккĕмĕш ыйтусем çинчен çырнă резолюцисене çирĕплетнĕ.

«Ирĕклĕхпе лайăхрах миршĕн кĕрешесси çинчен» йышăннă резолюци демократиллĕ çамрăксене тĕрĕс те нумая пыракан мир тумашкăн пур майпа та пулăшма чĕнет, çамрăксем хăйсене ÿстăн. культура тата ытти тĕлĕшĕнчен çитĕнсе пыма кирлĕ условисем туса пама ыйтнине пурнăçа кĕртес ĕçре пулăшма тата халăхсене пĕр-пĕринпе туслăн та пĕр-пĕрне хисеплесе пурăнма пулăшма чĕнет.

Резолюцире малалла çапла каланă: «Вăрçăра çĕнтерви вăраха пыракан мирпе хăрушсăрлăх тума пулăштăр тесе тăрăшаççĕ çамрăксем. Аслă державăсем пĕрле туса хунă пĕтĕм тĕнчери авторитетлĕ организаци мире сыхласа тăма пултарассине вĕсем ĕненеççĕ. Çамрăксем пĕтĕм тĕнчери организацин Сан-Францискăра çырса хатĕрленĕ уставне тата Пĕрлешнĕ нацисен организацине тунине ырлаççĕ, çав организацие вĕсем мире сыхласа тăмалли тата мĕнпур халăхсен пурнăçне лайăхлатмалли пĕтĕм тĕнчери политикăллă инструмент тесе шутлаççĕ».

Резолюцире 18 çула çитнĕ çамрăксене суйлав прави пама тата çынсене вĕсен тĕнне, рассине, национальноçне тата ыттине те кура танмар условисене лартнине пĕтерме ыйтнă. Колонисенчи тата сурмаколонисенчи халăхсен ирĕклĕн пурăнмалли тата уйрăлас тесен уйрăлмалли прависене пурнăçа кĕртессишĕн тăни çинчен каланă.

Çав резолюцисен пурте сасăланă, пĕр делегат çеç сасăламан.

Çамрăксен вăрçă хыççăнхи нушисем çинчен калакан ыйтупа та резолюци йышăннă. Çав резолюцире çамрăксен обществăллă пурнăçăн мĕнпур тĕп отраслĕсенчи нушисемпе требованийĕсене кăтартса панă.

Президиум сĕннипе конференци çапла йышăннă: Пĕтĕм тĕнчери демократиллĕ çамрăксен федерацийĕн советĕнче 120 член пулмалла, тенĕ.

Конференци тата президиумăн çак сĕнĕвĕпе килĕшнĕ: совет членĕсен хисепне малашне унăн пиллĕкмĕш пайĕ чухлĕ ÿстерме пулĕ, çав хисепе хăйсен йышĕ ÿснĕ пирки совета ытларах представитель кĕртмелле пулса тăнă çамрăксен организацийĕсем ыйтнипе, çавăн пекех тата федерацие. кĕрекен çĕнĕ организацисем ыйтнипе ÿстермелле пулĕ.

Федераци совечĕн кашни членĕн пĕр сасă пулмалла, тесе йышăннă.

Конференци Пĕтĕм тĕнчери федерацин Париж хулинче ĕçлесе тăмалла, тесе йышăннă.

ЭТТЛИ США-на КАЯС УМĔН

ЛОНДОН, ноябрĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Эттли Америкăна тухса каяс умĕн ĕнер Англи правительствин юлашки ларăвĕ пулса иртнĕ. Эттли çук чухне ун вырăнне совет лорд-председателĕ Герберт Моррисон ĕçлет.

ЛОНДОН, ноябрĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, премьер-министр Эттли хăй Вашингтона тухса кайиччен темиçе сехет малтан Лондон лорд-мэрĕ патĕнчи банкетра сăмах тухса каланă. Вăл Трумэн президентпа тата Канада премьер-министрĕпе Маккензи Кингспа калаçмалли ыйтусем çинчен каланă.

Ответлă редактор заместителĕ Н. С. СТЕПАНОВ.

ПĔЛТЕРНИ

1945 çулхи июлĕн 1-мĕшĕччен ĕç çулталăкĕ пĕтнĕ рабочисемпе служащисене усă курман отпускшăн тÿлемелли укçана вырăнти бюджетран укçа илсе тăракан хăшпĕр учрежденисемпе предприятисем ку таранччен те перекет кассине хывман. Çав укçана 1945 çулхи ноябрĕн 15-мĕшĕнчен кая юлмасăр перекет кассине хывмалла.

Чăваш АССР-ĕнчи перекет кассисемпе кредит управленийĕ.

ТУÇА ЯЛ СОВЕЧĔ

Октябрьски районри Туça ял Советне 4 колхоз кĕрет. Вĕсем 426 хуçалăха пĕрлештерсе тăраççĕ. Колхозсем кăçал ялхуçалăх çулне иртнĕ çулхинчен нумай малтан тата пысăк пахалăхпа вĕçлерĕç.

Çураки умĕн пур колхозсенче те пухусем туса ирттернĕ. Пухусенче ĕç планĕ туса, кашни колхознике уйрăм задани парса тухнă. Çураки планне ял Совет ларăвĕнче пăхса тухса çирĕплетнĕ. Çураки пуçлансан хăш колхоз мĕнле ĕçленине тĕрĕслесе пынине пула, колхозсем çуракипе 7—8 ĕç кунĕнче пĕтернĕ. Урхи тырăсене акса пĕтернĕ хыççăнах, уя тислĕк тăкма, çум çумлама, çĕртме сухи тума тытăннă. Тырă вырма тухиччен ял Советри колхозсем 377 тонна силос хывнă.

Ял Советри колхозсем тырпул пухса кĕртме хатĕрленес ĕçе районра чи малтан тытăннă. Ялхуçалăх машинисене, транспорт инвентарĕсене вăхăтра юсанă. Тырпул пухма лайăх хатĕрленсе тухнине пула, колхозсем ыраша планпа пăхниччен 2 кун малтан, суртрие пĕр кун малтан вырса пĕтернĕ. Тырă вырнă вăхăтрах кĕлте кÿрессине, авăн çапассине тата государствăна тырă парассине организациленĕ. Колхозниксем хĕвел тухиччен ĕçе тухса, хĕвел ансан тин, ĕçрен кайнă. Хĕрÿ ĕç вăхăтĕнче ватти-вĕтти пурте уйра тырă вырнă, кĕлте турттарнă, авăн çапнă тата ытти ĕçсене тунă. Тырпул пухса кĕртнĕ вăхăтра кашни колхозрах столовăй ĕçленĕ, унта кашни кун колхозниксене икĕ хутчен вĕри апат çитернĕ. Кунсăр пуçне ача яслисем пулнă.

Ял Советри колхозсенче кăçал уйрăм сдельщина йĕркипе ĕçленĕ. Çавна пула колхозсем кашни кун вăтамран 82 гектар тырă вырчĕç, кашни кун 20—25 лав государствăна тырă леçсе тăчĕç. Тырă памалли плана ял Советĕнчи колхозсем сентябрĕн 27-мĕшĕ тĕлне тултарчĕç. Государствăна тырă срокчен парса татас тĕлĕшпе уйрăмах ял Совет председателĕ Н. Васильев юлташ тата партипе комсомолăн пуçламĕш организацийĕсем питĕ те тăрăшса ĕçлерĕç.

Ял Совет исполкомĕ колхозри ялхуçалăх ĕçĕсене кăтартуллă йĕркелесе янине пула, колхозсем тырпул тухăçлăхне чылай ÿстерчĕç. Кашни гектартан вăтам шутпа 12 центнер тырă туса илнĕ. Уйрăм участоксенчен «Аниш» колхоз гектартан 13 центнер тулă, 13,5 центнер пăрса илнĕ. Ку колхоз, малтанлăха шутласа пăхнă тăрăх, кашни ĕçкунĕ çине 2,5 килограмм тырă, 3 килограмм çĕрулми валеçме шутлать. Халĕ колхоз вăрлăх, страховка фончĕсене чи таса тырă хывса хăварчĕ.

Ял Советри колхозсем государство умĕнчи парăмсене срокчен парса татассишĕн пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Буденный ячĕпе тăракан колхоз «Комбайн» колхозпа ăмăртса ĕçлет. Ку икĕ колхоз та государствăна аш-какай памалли плана тултарса, çитес çулшăн 60 процент аш-какай панă. Тельман ячĕпе тăракан колхоз 278 килограмм вырăнне 294 килограмм çу панă. Буденный ячĕпе тăракан колхоз 94 килограмм вырăнне 125 килограмм çăм панă.

Ял Советри колхозсенче ĕçе юратакан тÿрĕ кăмăллă колхозниксем, ялхуçалăх ĕçĕн мастерĕсем сахал мар. Вĕсем колхоз пурнăçне лайăхлатас тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлеççĕ. «Аниш» колхозри Л. Виссарионов, Ф. Павлов колхозниксем, хăйсем ватă пулин те, 20 ĕне вырнаçмаллăх çĕнĕ вите туса пĕтерчĕç. Сысна, сурăх тата чăх-чĕп витисене юсарĕç. Ферма работникĕсем валли çĕнĕрен шурă пÿрт лартрĕç. Ял Совет председателĕ Н. Васильев юлташ ут таврашĕсене хăш колхозра мĕнле тыткаланине тĕрĕслесе тăрать, çитменлĕхсем палăрсан, çийĕнчех колхоз председательне е бригадирсене пĕлтерет.

Ял Советри колхозсенче туртăм вăйĕ çителĕклĕ. Уйрăмах кунта вăкăрсемпе ĕçлессине лайăх йĕркеленĕ. 65 вăкăртан пурне те кÿлме тата ĕçлеме вĕрентнĕ. Андрей Емельянов, Филипп Григорьев тата Маркел Егоров колхозниксем вăкăрсемпе яланах ĕç нормине 120—130 процент тултараççĕ.

Ял Совет исполкомĕ укçа-тенкĕ пухас ĕçре те чылай çитĕнÿсем турĕ. Колхозсем укçа-тенкĕ пухмалли плана кварталтан-квартала ытлашшипех тултарса пыраççĕ. Ял Совечĕ IV-мĕш кварталти укçа-тенкĕ пухмалли плана Октябрь уявĕ тĕлне 125 процент тултарнă. Государствăн тăваттăмĕш военнăй заемне 341.000 тенкĕлĕх сарса майăн 6-мĕшĕнче укçине пĕтĕмĕшпех перекет кассине хывнă. Укçа-тенкĕ пухас ĕçре финагент А. Сергеева тăрăшса ĕçлет.

Ял Совечĕ Хĕрлĕ Çартан таврăнакансене лайăх кĕтсе илет. Ку таранччен килнĕ 21 çынран 18-шне ĕçе вырнаçтарнă. Петр Васильев, Федор Федоров уйхир ĕç бригадирĕсем, Сергей Тимофеев старши конюх, Александра Адрианова кладовщик пулса ĕçлеççĕ. Вĕсем хăйсене шанса панă ĕçе лайăх туса пыраççĕ.

Туса ял Совечĕ хăйĕн вăйĕпе Хурамал çырминче пысăк кĕпер хывнă. 4.000 тенкĕ шкул хуçалăхне юсанă çĕре тăкакланă. Кунта халĕ фельдшер пункчĕ уçса ăна валли сĕтел-пукансем, кроватьсем, тÿшек-минтерсем тата ытти япаласем те çителĕклĕ туяннă. Ял Советри культура учрежденийĕсем валли 40 тонна торф кăларса турттарнă, 60 кубометр вутă касса хатĕрленĕ.

Ял Совет çумĕнче 23 çынран агитколлектив организациленĕ. Агитаторсем хăйсене çирĕплетсе панă участоксĕнче докладсем, калаçусем туса ирттернĕ. Кунсăр пуçне, кашни колхозрах стена хаçачĕ, бригадăсенче боевой листоксем кăларса тăраççĕ. Агитколлектив руководителĕ пулса ял Совет председателĕ Н. Васильев юлташ ĕçлет. Вăл час-часах агитаторсене пухса политикăллă тата агитациллĕ-массăллă ĕçе епле туmaллине, калаçусене вырăнти примерсемпе çыхăнтарса пыма вĕрентет. Агитколлектив вăйĕпе пурĕ 43 доклад туса панă, вăл докладсене 1.115 çын итленĕ. Агитколлектив ĕçне ВКП(б) райкомĕ тăтăшах пулăшса пырать.

Партин пуçламĕш организацийĕ ял Совет исполкомне ĕçре кăтартусемпе сĕнÿсем парса пулăшать. час-часах актива пухса канашлусем туса ирттерет. Вăл канашлусенче ĕçри чăрмавсемпе çитменлĕхсене палăртса, вĕсене пĕтермелли майсене кăтартса парать. Коммунистсем хăйсен примерĕпе ытти колхозниксене ĕçре хавхалантарса пыраççĕ.

Н. АНДРЕЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: гор. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0-67. заместителĕн — 2-89. секретариатăн—4-26, пропаганда пайĕн—2-89. парти пурнăç пайĕн—3-97, промышленность пайĕн—3-99. ялхуçалăх пайĕн—3-99, рабселькорсен пайĕн—0-67, издательство конторин — 0-23.

НТ 00450 Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. ф. б. 59х42. 1 п. л. Тираж 16.000 экз.